8-мĕш №    Хакĕ 25 пус.    Ийуљ—август 1933 ç.

# Капкăн



**Класс тăшманĕ кă-мăлне кайман**

— Мĕн хуйхăлăн утса пыран?
— Петров й. хула пленумĕнче черетсене пĕтерме хушнă.
— Мĕн хуйхăрмали пур унта? Черет пĕтнĕшĕн савăнмала.
— Савăнмала унта. Черет пулмасан ăçта-ха манăн пĕтĕм халăх умĕнче совет влаçне вăрçса тăрас?

# Ытти уйес хулисем пекех пулнă Йетĕрне.

Тĕрĕссипе калăсан, ытти уйесла хуласенчен нимĕнпех те уйăрălса тăман Йетĕрне хули. Нимĕнле палăх та, нимĕнле тăнран йаракан йапалах та пулман Йетĕрнере. Çанталăк тĕлĕшĕпе кăна çÿлерех тăма пултарнă ку хула. Мĕншĕн тесен Çĕрпÿ, йе ытти уйес хулисенчен уйрăм кунта Сарă вăрман, хăйарлăх... ытти уйес хулисенчи пекех пĕтĕмпех пĕр йĕрпе пынă кунта ĕçсем; вăхăт авалхиле, „ырă çынсем" каласа хăварнă тăрăх, „турă хушнă" йевĕр шунă кунта.

Пÿрт пуçĕнче кашниннех палиссадник. Кантăк çинче гераљ çуралнă. Унран кайа мар жаçминпа фукçи чечекленнĕ. Шап-шурă, йур тĕслĕ чĕнтĕрлĕ чаршавсем хупланă кантăксене. Çтена çинче ырă кăмăллă аслашшĕсем, асламăшĕсем, кумĕсемпе куммисен фотоÿкерчĕкĕсен пысăк коллекцийĕ. Хутлă хутлă арчалă комодсенчен лăплантаракан тутлă шăршă саралса тăнă. А кунта тĕпленсе пурăнакансем мешчансем, хуçасем, Земски началљник хăйĕн чаплă арăмĕпе, полицейски тата становой урйадник, тата пысăк уйес чинĕсенчен пуçласа миравай судйа писсăрĕ таран чинсем шутланнă.

Вообче ытти уйес хулисенчен нимĕнпех те уйрăмми пулман Йетĕрнем.

## Пирĕн герой çуралса ÿснĕ çакăнта.

Апла пулин те çак хуларах, çавнашкал лăпкă çемйерех çуралса ÿснĕ те ĕнтĕ пирĕн герой. Чипер те, илемлĕ те пулнă вăл. Йатне-шывне калас пулсан Мишă Бурашникăв темеле килет ăна пирĕн. Пурте йуратнă Мишăна Йетĕрнере.

—Чипер каччă çитĕнтерет пирĕн полицейски,— тенĕ Йетĕрнери хуçа майрисем Мишăна мухтаса. Хăйсен хĕрĕсене Мишăна каччă пама май килмĕ-ши тесе те чылай шухăшланă вĕсем.

Малтанлăха çакна пĕлтерме пултарчĕ автăр хăйĕн геройĕ çинчен.

## Кĕтмен вăхăтра аслати кĕмсĕртетнĕ...

Чинавниксемпе хуçасем пĕрре те кĕтмен ку аслатийе. Анчах çав вăхăтра мешчанла тата чиновникле кивĕ Йетĕрне çинче те вăйлă аслати кĕмсĕртетсе кайаť. Чылай улшăнусем пулчĕç Йетĕрнере аслати хыççăн. Земски началљник хăйĕн чаплă арăмĕпе курăнмаççĕ ĕнтĕ Йетĕрнере, становойпа урйадник те еппохă екранĕ çинчен ĕмĕрлĕхех иленнĕ çавăн хыççăн.

Çапла улшăнусем пулнă Йетĕрнере.

## Ухмах тетри-мĕн есĕр Мишăна?

Çук, ашшĕ пекех ăслă Мишшă. Чипер чухлаť вăл: ăçта тата мĕн шăрши кĕрет. Çавăнпах та пулĕ ĕнтĕ килĕшми пулаť вăл çакă мешчанла кивĕ хулапа. Пĕлетĕр-и ăçта кайаť пирĕн Мишшă?

Мишшă промышлĕннăçлă хулана, рабочисем хушшине кайаť. Рабочи блузă тăхăнаť вăл. Çапла ĕнтĕ Мишшă рабочи пулса тăраť. 1926 мĕш çулта савăтран Хĕрлĕ çара лекет Мишшă. Хĕрлĕ салтак йачĕ мухтавлă мар тетри рабочи йатĕнчен. Мухтавлă çав, Мишшă хăй тăнсăр мар пирки çакна та лайăх чухланă. Паллах, 2 çул пурăннă ĕнтĕ Мишшă Хĕрлĕ çарта. Малала мĕн тумала-ха? Çыраť вăл Йетĕрнене, ашшĕ патне, ĕлĕкхи йулташĕсе[м] патне. А лешсем ответлеççĕ: иртерех-ха, тăхта ачам Тавçăрса илет Мишшă. Аха, савăга кĕмелле-иç ка лех, — тет вăл. Савăга кĕрет. А кунта, савăтр парти ĕретне кĕрсе тĕпленет Мишшă.

Çапла ĕнтĕ пирĕн Мишшă партийцă.

## Халĕ таврăнăпăр Йетĕрнене.

Кунта вулакансем час-часах чипер кăна пĕр çам рăк çынпа тĕл пулма пултараççĕ. Лайăх тумлан нă вăл, мăйĕнче чипер галстук, аллинче унăн акăл чан туйии; шăлĕсем ылтăнран ку çамрăкăн А кăсйинче (обезатĕлнă ан манăр çакна) унăн парт билет. Çакă пулаť те ĕнтĕ Мишшă Бурашник кăв.

Вăрман, çарансем, çемçе Сăрă шывĕ çĕнĕре курчĕç Мишшана. Мишшă каллех ашшĕ патĕнче а, ашшĕ ĕнтĕ колхозник халĕ унăн.

Пĕре чипер кăна уйар кун çаплала пулнă ĕç Йетĕрнери влаçсем патне Мишшă зайавитсă тунă «Парăр мана, рабочи-производственике, парти член не ĕç»,—ыйтнă Мишшă. Лăпкă тата çав вăхăтра ответлă ĕçре ĕçлес килнĕ Мишшăн. Чăнах та çавнашкал ĕçех параççĕ Мишшăна Йетĕрнере.

«Сат пахча çимĕç» уйрăмĕнче ĕçлеме пуçăна Мишшă. Ĕçлет ĕнтĕ хайхи уйрăмра.

## Вăхăт знай малала шунă.

«Сат-пахча çимĕçĕн» Йетĕрнери уйрăмĕн ĕçĕ кăна ниçтала та шуман. Нимле ÿсĕм те пулман «Сат-пахча çимĕçĕнче» Мишшă ĕçленĕ вăхăтра уссинчен ытла сăтăрне самай тÿснĕ «Сат-пахча çимĕç» уйрăмĕ Мишшă ĕçленĕрен.

Личнăç тени, вĕреннĕ çынсем каланăтăрăх, пысăк ролех выљамаť теççĕ историре. Анчах хăшпĕр личнăçсемпе хăш-пĕр историсем пулаççех вара. Пирĕн Мишшăн та чылай «историсем» пулса иртнĕ Йнтĕрнере. «Сат-пахча çимĕçĕнче» саботажла ĕçлесе пынăшăн Мишшăна «лăпкă тата ответлă ĕçрен" хăтараççĕ. Ашшĕне (йĕпе çине сапа тенĕ пек) полицейски тата лишенěц пулнă пирки колхозран кăларса сирпĕтеççĕ. А пуричен ытла партбилет тени çухалаť пирĕн Мишшăн (Йетĕрнери Рай КК парти ĕретĕнчен шăлса пăрахаť Мишшă Бурашниккăва).

## Малала çакна пĕлтересшĕн автăр.

Пĕр самантра чупса çитнĕ Мишшă РайКК-на. Нимĕн те тухман. Çавнашкалах васкавлă килнĕ тавăрнă, хăвăрт кăна хăйне парти ĕретĕнчен „незаконнă" кăларни çинчен жалăбă-аппељаци çыраť те çакнашкаллине тÿрех Михаил Иванчă патне... Тĕпĕçтăвкома йарантараť.

Çакна пĕлтерни выранăсăр пулмаť пуљ тата. Нумайах пулмаť ПСК(б)П ОКК партколлегийĕ Михаил Бурашниккăв хăй те пулнă.

— Тĕпкомпа Тĕп Контрољ Комиççин йулашки пленăмĕн ĕçĕсем çинчен пĕлетни есĕ?— ыйтнă партколлегинче Бурашниккăвран.

— Пĕлме пултараймастăп, — «ответленĕ» ликĕккăлă баритон.

— СССР Совнарком пуçлăхĕ кам халĕ?

— Сталин пулас,— çавнашкалах илтĕнӗ франт
аси.

— Мĕншĕн хаçат вуламастăн (Шупашкарта туха-
ансене те пулин)?

— Мĕншĕн тесен пурте чăвашла çыраççĕ вĕсем,
-кĕскен рапăртланă мазурик.

Унăн сăмса умне „Красная Чувашия" хаçата ил-
е пырсан, ун çине вăл шурă курак çине пăхнă
евĕр тинкĕрсе пăхса илнĕ.

Йетĕрнери рай КК йышăнăвĕ çаплах йулаť. „Пи-
н" Мишшă партбилета ĕмĕрлĕхех çухатаť çапла
айна.

Çапла „геройăн" прикłюченийĕсем çинчен ча-
атпăр та ĕнтĕ.

Малта парти тасатăвĕ тăраť. Ку тасату пĕр Бу-
шниккăвăн прикłюченийĕсене кăна мар палăртĕ
урашниккăвсем, паллах, пĕччен çеç мар). Пирĕн
рти ĕретне кĕрсе йулма пултарнă Бурашниккăв-
не ку тасату парти ĕретĕнчен пĕр хĕрхенмесĕр
вĕ никама йурăхсăр çўп-çапа шăлса ывăтнă пек
ларса çапĕ. Çакна автăрпа вулакансем çирĕп
анса тăраççĕ.

**Ив. Никколайĕв.**

Шупашкар, 1933.

# Петĕр призывник

Петĕрĕн çитес ернере призăва тăмала.

Çавăнпа та вăл пайанхи кун ыран пайан тухса
йас салтак пек хатĕрленсе çитрĕ.

Хăйне вăл илсе йарасса хытă шанаť. Мĕншĕн
сен Петĕр пек патмар ача йалта çук вĕт.

— Епĕ те Хĕрлĕ çара кайаймасан кам тата кайĕ
врара,—терĕ Петĕр, урамра выртакан йуман кас-
на йатса пăрахса.

— Салтака кайрех Петĕр, тĕлĕкре те куртăм,—
рĕ пускил арăмĕ Хĕветле.

Хăй те çаплах шутлаť Петĕр. Çавăнпа та вăл
изăвра илсе йарсан хатĕрлевме час мар тесе,
лтанах амĕшне пĕр пăтран сăра тутарса хучĕ.

Ыран призăва кайас тенĕ чух çичĕ пăт кĕрекен
раш мăйахне кĕлет алăк умĕнчен пўрте йатса
терчĕ. Тĕреклĕ те вăйлă хулçурăм, илеççĕ, тет,
рлĕ çара.

Çавăнпа та вăл призăва кайас кун йулташсемпе
р четвĕртне йăвантарса хучĕ. Унтан урама тух-
н:

— Сиртен хурмăйсенчен салтак пулаймĕ,—тесе
ртсе утса йачĕ Петĕр пĕлтĕрхи призăвран йул-
вăрăм Йаккăва.

Çак кун Петĕр призăвра пулчĕ. Анчах ăна тăва-
сем кулак пулнă пирки, кун та тымарри çавăнта-
х тесе Хĕрлĕ çара илсе йаман. Вара Петĕр çак
н хайхине салтака илсе йаман пулин те, тунă
ра хĕрхўленсе кайаť тесе, йулташĕсемпе çĕрĕ-
х ĕçрĕ.

Анчах кам-ха пулнă унăн йулташĕсем?

Хăй пекех Совет влаçĕн сыхлăх ĕçне йуратман,
а мĕнле те пулин сийен кўме пулмĕ-ши тесе
екен пирĕншĕн тăшманла çынсем пулнă.

**Сорокин**

# Ех, аванччĕ пурăнма ун чухне.

Хаłь ак, кĕркунĕ... Сивĕ çил... Тек-текех кайăк
йурри те, йем-йешĕл тумлă çуркунĕ те ачашшăн
лăпкамаст сана.

Ех, аванччĕ, пурăнма ун чухне.

Петĕм чĕрчун савăначчĕ. Ик аллине хире-хирĕç
çупсах ташлаччĕ хĕвел. Аслă-Каçалри партйачейк-
кă çекретарĕ Короłков, природăна сĕре йурага-
канскер тожĕ. çутçанталăк кĕввине ĕнереччĕ. Çут-
çанталăк кĕввине кăна мар, улăхра йанăран çава-
сен илемлĕ кĕввине те ĕнересшĕн çуначчĕ вăл.
Анчах.., Мĕн тăван?.. Короłкова амăшĕ çуратнă
хыççăн: „ывăлăм, çаранлă пул" тесе пиллеме ман-
нă. Çавăнпа Короłковăн çаран çук, мĕн çуралнă-
ранпах çарансăр гурнаť вăл. Çитменне тата вăл
кунтисем мар, а Йе чĕк р-нĕ.. „Пулас çук çава
сассине ĕнерме, пулас çук çунса кăварланан ăш-
чике сўнтерме" тесе шухăшлаť Короłков.

Анчах етем шухăшне Соломонпа пĕр танах пĕл-
ме пултаракан йалсовет президиумĕ Короłков
хуйхине тапса угма шухăшламарĕ.

„Жалкă штоł, касса парас çавна çаран, кирек
мĕн кала, хамăрăн пуçлăх вĕт вăл" терĕ хăйĕн
историлĕ постановленисенчен пĕринче.

* * *

Пысăкран та пысăк хуйхă пырса çакланчĕ Ко-
роłков çумне. Çўçрен йавкаласа тытсах туртса
антарчĕ вăл Короłков телейне.

— Райзо памаст. Райзо сана вăта пўрнепе шĕ-
вĕр пўрне хушшине пуç пўрне чиксе кăгартрĕ,—
терĕ ăна йалсовет пуçлăхĕ.

Хытă çилленчĕ Короłков. Ылттăн хумлă ыраш
тинĕсне çурласемпе жнейкăсем ишме тухиччен
чирлесе выртрĕ вăл çилĕ чирĕпе.

Чиртен вăранса каллех çанталăка курса çўреме
тесе „Болшевик" колхоз хирне тухса утрĕ.

„Хама валłи ишсе çўреме пĕр гектар çурă та
пулин касса илесчĕ ку ылттăн хумлă ыраш тинĕс-
не" тийекен шухăш пырса çакланчĕ ун пуçне.

Колхоз пуçлăхĕпе пăшăл-пăшăл калаçнă пулнă,
„На этот раз удачно"—тесе шухăшласа хăйĕн
çурлине йурă йурлаттарса, гектар çурăлă ылттăн
тинĕс лаптăкне типĕтрех Короłков.

Чун канчĕ. Нимĕнле шухăш, нимĕнле хуйăх
пĕрчи те кансĕрлемерĕ ăна.

„Район сирĕ Çеłпо прикашчикне, Боровкова
халех, халех ĕçрен освободиť тума хушаť.
Ун вырăнне урăх çын тупса лартăр тейекен
отношенин те ун пуçне пырса кĕрсе чăрмантарма
шикленчĕ. Пĕр шкул ачи урамра потфĕл ăшĕнче
çеłпо пуçлăхĕн, Боровковăн ўсĕр пуçне пичетпе
укса-тенкине, тата документсене тупса илсе пыр
са парсан та, ку манă ан кансĕрлетĕрха" тесе
айаккала, сирсе хучĕ.

Каллех чунĕ канчĕ Короłковăн. Анчах хаłь ак
çанталăк çуркуннехи пек мар... Кĕркунĕне.., Сивĕ
çил... Шăм шака çўсентерекен сăмар, йур çăваť.
Кроłков пĕчченех. хăй кĕсйинчи партбилета кă-
ларса илеслех кисрентерекен асăрăн та писĕрĕн
кĕрлесе чупакан тасату тăвăлĕнчен хăраť вăл.

**Каçалсам.**

Спиридон Шăпчăк.

# Ой, ăй, о..ой! ..Йалан—выходной



Те, куккаран—Луккаран,
Те, Петтăрша—Макçăмран,
Ăна·кăна пĕлместĕп
Тĕпчемешкĕн сĕнместĕп:
Хайар тапак тултарса,
Пăкки-пакки тутарса,
Çăра тĕтĕме ĕмсе
Вереннĕ еп чĕлĕме.
Кирек йепле пултăр вăл,
Ман ăшăмра çилтăвăл,
Пĕрре чĕлĕм туртмасан,
Пушшех, тапак пулмасан,
Вăрти-вăрти çаврăнать
Пĕтĕм чуна хускатать.
И так... карăм тапак шырама
Шупашкарти хулана.
Кĕтĕм кивĕ масара,
Тухрăм çўлти пасара
Манăн умра столовой:
Черет пысăк ой, ой,ой!
„Кунта пурши çав... тапак,
Кала, мучи, йеçли так?"—
Ыйту патăм старике
Ун умĕнче сар пике.
Кунта тапак сутмаççĕ,
Апат кăна сутаççĕ,
Терĕ мучи çиллене,
Шур сухалне силлесе.
Çынна мĕн те, мана мĕн
Выçă тăма алла мĕн,
Тăтăм еп те черете,
Çынсемпе пĕр ĕрете.
Утăм хыççăн утăмпа
Хамăн выçă хырăмпа
Çитрĕм еп те кассăна
Уйăрăлмасăр массăран.
— Ку хак парса çиййччен...
Урăх кĕмĕп виличчен! —
Сура-сура йатлаçса,
Силлесе пуш хутаçса,
Пирĕн умри сар пике —
Йалтан килнĕ сар инке,
Тухрĕ-утрĕ çимесĕр,
Йултăм нимĕн пĕлмесĕр.
— Мана парха пĕр апат! —
Ыйтрĕ старик вашават.
—Дайте рубл шестьдесят! —
Шчот выҫанчĕ шăрти-шарт.
— Вăл хакпала кирлĕ мар,
Пĕр кашăк та ан антар.
Пирĕн хамăр колхозра,
Йе çавăнти совхозра,
Апат çиме хĕрĕх пус,
Есĕр ытла шăши йус! —

Утрĕ старик тулала,
Манăн пулчĕ пымала:
Хăть те пулчăр шăши йус,
Патăм тенкĕ утмăл пус.
Ех апат,
Хăть çап набат:
Пĕр турам улма,
Урăх çук курма!
Пирĕн сыснаферминче
Хăть танаштар темиçе,
Ку йашкаран лайăхрах
Ик-виçĕ хут çăрарах.
Кашăк чикмесĕр,
Тухрăм çимесĕр.
Утрăм малала
Умри лапкана:
**„ЦРК номер шесть приходите все тут есть"**
—О, килĕр, килĕр!
Мĕн кирлĕ—илĕр.
Укçусем пур тăр,
Акă çĕн пуртă,
Кузнечни пăра,
Питĕрĕнмен çăра
Вун тенкĕ хакĕ
Çавăнта „пылакĕ".
Пур тăр вĕт ачăр
Илер ак хачă—
Çич тенкĕ çурă
Мĕн калăп урăх.
Ак тата сумкă—
Целый котомкă,
Вăтăр тенкĕ хакĕ
Хаҫ сутма хатĕр.
Ей, та, ну·у!
Кай, таварăм, ту!
Выртан виçĕ çул
Как будто йăвăр чул.
Ну, хускал,
Ех, раскал!—
Çак таварсем ĕнтĕ виçĕ çул,
Как будто вĕсем йăвăр,
Выртаççĕ çакăнти лавкарах
Пилĕк хут хаклă хакпалах!
„Лăпта шăп виçĕ тенкĕлĕх
Сутрăм еп тавар.
Уйăхра алă тенкĕлĕх
Кайать ман тавар"—
Шорккинăн йурри.
Йурламасть вăл йури!!!
Унпа йунашар
Леспромхозартел
Вăл та хура·тар
Курать çав тери:

Таварсем виçĕ хак,
Чисти точнă так!
Таварсем каймаççĕ
Икшер çул выртаççĕ.
Утрăм малала
Хулана шалала.
„Це-Ре- Ка"
Кĕремха, нук-ка.
Ой, скандал,
Хăть тăхăн кандал:
Макра та йĕрў
Пырать пит хĕрў!
—Вунă тенкĕ мана
Улталарăн кунта!—
Йĕрет Шăхаҫсем
Константинăв Çемен.
—Не оскробляй, чувашин,
Не знаю дел вашше!—
Кассăран—пĕр кăтра майра
Ответлет сайра.
—Еп чухăн петҫак.
Йей поху не так,
Мĕнма суйас,
Мĕн ма улталас!—
Тархаслать Çемен
Укçине чикмен,
Çĕтĕк çаннипе
Шăлать куççуҫне.
—Сторонис, образина,
Гадиш магазина!—
Хирĕçет пĕр каччă
Майрапа таччăн.
Кунта ун пекки
Пулать кашни кун,
Сар майранăн йăли...
Çавăн пек вара ун!
Тухнă тухнах çўрем-ха,
Пур çĕре те çитем-ха.
Утрăм Атăл йеннеле
Кĕтĕм ГОРТ магазинне.
Тавăраççĕ аванс
Ĕнтĕ ку аван!
Анчах ни укçа,
Хăть вил çапăçса;
Нимĕнле тавар,
Хăть пĕр шалавар
Курăнмасть ниăçта,
Ех, çав пăчă та!
—Берите водки,
Шпулечные нитки,
Тридцать рублей
Пустяки вед эти!—
Çапла тавăраççĕ аванса.
Çапла тухатăн вара „авланса".

Ку, вăл—факт,
Пытарайми факт!!!
—Хăта,
Каласа пар-ха тупăта,
Илсе килтĕмĕр улма-купăста
Параймастпăр вĕсене ниăçта!
Ман ума тăчĕç виç арăм,
Лавĕсем тăраççĕ пĕр йарăм.
—Ăçтисем?
—Тутаркас!
—Хăнча килсе?
—Иртнĕ каç.
Камĕнĕв урамĕпе çўлеле
Улăхрăмăр çўле çитиччен.
Унтан сулахай йеннеле
Пăртăмăр çулĕ пĕтиччен.

—Тут,
Овощеприемочный пункт!—
Ыйтса патăм вĕсене
Чăн-чăннипех хĕрхенсе.
Вăт тебе раз,
Ĕнтĕ мĕн тăвас:
Приемщичк çук,
Кăнтăр кунĕ чух,
Унсăрăн илмеççĕ:
„Пĕлместпĕр", теççĕ.
Ей, йай-йай,
Ĕçлеççĕ вĕт вăй-шай!

Ăçта кунта пуçлăх,
Ăçта ответлăх,
Патшалăхăн пурлăх
Йе ответсăр!
Тупман тăк тапак
Так и так
Кайатăн кайала
Хулана.
Ăçтан? Йепле?
Йе шухăша кайнипе,

Çитнĕ-тăнă пĕр çĕре—
Типографи ларйокне.
Ну, ача-а-ам,
Пăхма та кичем:
Хам куçăмпа хам куртăм,
Черет тунă çур çухрăм!
—Мĕн патне?
—Çăкăр патне.
—Пайан пулатăи?
—Пĕлместпĕр!
—Тăрагтăр вара миçе кун?
—Пайанхипе виçĕ кун!
Темиçе кил çăкăра
Вăрçа-вăрçа йатлаçса
Çур çухрăмлă чĕр черет
Кĕтет-кĕтет илеймест.

Каç пулчĕ, таврăнтăм.
Çўресе ывăнтăм.
„Неушлĕ кашни кун çавăн пек?"—
Пуçа шухăш çĕмĕрет.
Шухăшсем чараççĕ çывăрма,
Йăвăр сывлама.
Так и так...
Туртассăм килет тапак.

Ирхине,
Çичĕ сехетре,
Çирĕп сыртăм урана,
Тухрăм каллех урама.
Урамра халăх.
Тăман пулҍ кăлăх.
Тăтăм еп те черете—
Çынсемпеле ĕрете:
—Тапак?
—Нет, не так!
—Мĕн?
—Çăкăр... илмен!..
—Çăкăра урамранах памаç пулҍ,
Килкартине кĕрĕр штоҍ!

—Çук, Пирĕн черет кунта
Есĕ пĕлместĕн унта!!!—
Ответлерĕç темиçе сасă,
Чун хăрарĕ манăн дажĕ.
Рабфакри студентсем черете
тăрса,
Ларйокран пуçласа хапхаран
тухса,
Çавăрса илнĕ пĕтĕм урама,
Мĕн курман? Тата мĕн кур-
мала?!
„Петров калавĕ черетсем пĕ-
терме
Ку ĕçре вирлĕрех ĕçлеме,
Çавăнпа черетсем пĕтиччен
Тăрас теççĕ пулҍ чĕре каниччен"—
Шутласа пыратăп çулпала
Хулана анатăп малала.
„Союзтабакторг"
Сикрĕм—карт!
Ох,
Çырлах:
Черет çук!
Пытăм патнерех—
Магазин умнерех:
„День выходной"
Пытăм тепĕр кун.
„ЗАКРЫТ НА ОБЕД"
Тагах тепĕр кун:
„ТОРГОВЛИ НЕТ"
Унтан тепĕр кун:
„ДЕНЬ ВЫХОДНОЙ"
Ой, ой-ой!
Манăн туртасси пулас çук.
Мĕншĕн тесен йалан уççи çук.

* * *

Çакăн пек картинсем выҍаççĕ
хулара.
Выҍĕç-ши вĕсем пирĕн алăра.!

---

## ...АСЛĂ АРАПУÇĔНЧИ „ХĔРЛĔ ПАЙĂРКА" КОЛХОЗРИ КАЛАÇУ.

—Епĕ Шупашкарта пултăм, поликлиникăра,—тенĕ ашшĕ хăйĕн 8 çулхи сарă ачине. — Унта манăн йака Ренген аппарачĕпе çутатса пăхрĕç.

—Мĕнлескер вăл Ренген аппарачĕ тенĕскер? —ыйтнă ашшĕнчен ачи.

—Хунар пур çавăн пекки. Çав хунар çутине етем çине йарсассăн етемĕн айак пĕрчисем пĕтĕмпех курăнаççĕ.

—Хунарсăрах курма пулатĕске-ха айак пĕрчисене?
—Ăçтан курма пултаран ара?

—Акă пирĕн коҍухсем Шурйакăвпа Гуççĕв пăхакан лашасен хунарсăрах айак пĕрчисем курăнаççĕ. Нимĕнле аппарат та кирлĕ мар курма.

## ШУПАШКАРТИ 6-мĕш НОМĔРЛĂ СТОЛОВĂЙРА

—Сирĕн апата-ĕх! — чĕлхене çăтсах йамала.
—Питĕ тутлă-и мĕн?
—Çук. Ытла сахал паратăр.

## Чĕлхипе пуçĕ çинчен каласан.

Шупашкар районĕнчи Чăкăр йалсовет çекретарĕ Кирил Павлăв таçтан хăйаматран кулак чĕлхине тупнă та хăй çăварне кĕртсе лартнă.

Халăх пуххисенче те, тата йалсовет пленăмĕнче те укçа-тенкĕ пуçтарас тĕлĕшпе çапла калат вăл:

— Обйазатĕлнăй тўлевсене татасах пулат. Леш ирĕклĕн тўлемелисене тăхтасан та йурат. Колхозниксем ĕнтĕ татаççĕ, пĕччен хуçалăхлисем татмаççĕ пуль. Татмасан та нимĕн те тăвас çук,—тет.

Çав кулак йуррине йурла-йурлах „Капкăнăн" йĕплĕ çăмах хуранне кĕрсе ўкнĕ вăл.

Павлăв йулташ, мĕншĕн сана хулпуççи çине пуç хурса панă? Çĕлĕк тăхăнса çўреме-ши, йе кулаксен йурр̧ине йурламали çăвара тума выrăн пултăр тесе-ши, йе тата урăх йапалашăн-ши,—каласа пĕлтерччĕ ĕнтĕ пире пĕлмен çынсене.




## КУРАССИПЕ ИЛТЕССИ.

Физика урокĕ. Çутă̆па сасă пĕр çекундра мĕн чухлĕ кайни çинчен каласа панă хыççăн, учитĕл хăйĕн сăмсине чакаласа ларакан пĕр ачаран ыйтать:

— Иванов! Хăшĕ хăвăртрах пулса пырать: курасси-и, йе илтесси?

— Курассине хăвăртрах курма пулать.

— Мĕнпе доказать тума пултаратăн?

— Сăмахран, Шупашкартан паракан радиоинформацийе илер. Ирхине хаçатра мĕн вуласа куратăн, çавна каçхине тин радио тăрăх илтетĕн.

## УТИЛСИРЙО ТĂВАКАНСЕМ.

Хăшпĕр администратăрсемпе хуçайственниксен шухăшламали аппарачĕ те пуçра, те урăх вырăнта.

Музей йышăннă чиркÿ тăррисене пăсакансем малтан темиçе кун хушши чиркÿ тăрринчен кирпĕчсене тÿрех айалти крышă çине пăрахса крышисен шуçĕсене пĕтĕмпех шăтарса пĕтерчĕç те, кайран вара шăтса пĕтсен, шуçне тин сĕвсе илеççĕ. Мĕн чухлĕ шуç пĕтрĕ пулĕ çапла хуçасăрлăхла ĕçлесе пынă пирки?

Хулан утилсырйо планĕ тулман, тет. Çавна тултарма чипер шуçравах утилсырйо тума шухăш тытнă пулмала ĕнтĕ кусем, комунхозра ĕçлекенсенчен хăшĕ-пĕрисем, тăм çамкалисем.



## ЦРК, хăçан сирĕн ларйоксенче черетсем пĕтĕ

ЦРК 9, 10-мĕш № ларйокĕсенче çăкăр чер
пĕтни палăрмасть.



— Аçта чупан?

— Ав çÿлте çăкăр черечĕ тăрса кайнă. Çавăнт
чупатăп.

## Кахалсем

Тинкли, тинкли, тинкли тон!
Иљинкăра Илен кон.
Шашкар, Шатра таврашсем,
Лодăрсемпе çектантсем,
Тырă вырас вырăнне,
Кĕл тăваççĕ туррине.
Пулса çитнĕ тыррисен
Тăкăнаççĕ пĕрчи ем.
Пур лодăр та пĕр пек мар,—
Акă пăхха пĕр хастар:
„Волга“ колхоз бригадир,
Ермолайĕв командир
Çектантсемпе пĕрлешсе,
Ĕçе прахать уйхир те.
Çил вĕçтерет чиркÿве.
Усси пур ши çак çынтан,
Ермолайĕв йулташран?

Кĕтре Павăл.

# Шыракан тупаť

Пĕр ҫын йалтан килсен Шупашкар урамĕсем тăрăх културă шырама тухнă тет. Чи малтан, конешнă, ЦРК ларйокне кĕрет. Ларйокĕ краççин сутаканни пулнă (Осоавиахим магазинне хире-хирĕç лараканни).

Прикашчĕкĕ краççин илме пынă членсемпе калаçса çăвар тутине те сайа йарасшăн мар. Хăтăрса тăкаť вĕсене. Член кĕнекисене сывлăш тăрăх ывăтса йараť. Черетре 60—70 ҫынран кайа мар.

— Мана културă кирлĕччĕ те...

— Вăл йатлă тавар кунта ҫук. ЦРК-ан почтă айĕнчи магазинне кайса пăх,—терĕ прикашчик ыйтакан ҫине пăхмасăрах.

ЦРК магазинĕнче ăна:

— Тавар вообшче ҫитес ернере килмеле. Канаша ҫитнĕ те, Сойузтранс кўрсе параймарĕ-ха. Илетĕн пулсан ерех пур, културă тени ҫук вара. Планлă снабженийе кĕртмен ун пек йапалана пирĕн,—тенĕ.

Ҫын вывĕскă ҫапнă тепĕр ҫурта кĕрет.

— Културă пур-ши сирĕн тесе килтĕм те,—тет кĕрсен.

— Културă? Ҫук ун пек йапала. Пĕлместĕн-и кунта пирĕн парикмахĕрски.

Ответ параканнин куҫĕсем сўнесле пăхаççĕ (ўсĕр пулмала).

— Ҫук еппин?!

Кайала ҫавăрăнса почтă ҫуртне пырса кĕчĕ ҫын. Пĕр сĕтел патнеле черет тăрса кайнă арҫынсем те, хĕрарăмсем те. Пурте жалăбăпа. Хаҫат килмест, журнал илейместпĕр, тет кашнийех тарăхнă сасăпа.

— Културă пур-и сирĕн?

Сĕтел хушшинче ларакан сарă хĕр шухăша карĕ.

— Културă?! Ҫукчĕ халиччен. Кулков пур, Крашавина пур. Културă ĕҫлемест. Ҫук.

Карĕ ҫын кайала урам тăрăх Решетин хуҫан пулнă ҫуртра вырнаҫнă Табаксойуза кĕчĕ.

— Мен пур сирĕн магазинта етеме кирли?

— Етеме чи кирли-и? Карт пур...

— Културă пур-и?

— Културă-и? Ун пек йапала тытмастпăр.

— Хупас магазина. Ларса йăлăхрăн пулĕ есĕ те,—терĕ те арҫын прикашчикĕ хĕрарăм прикашчикне, алăк патнеле уттара пачĕç иккĕш.

Ҫын та тухрĕ вĕсемпе пĕрле.

— Неушлĕ тупаймастăп?!

Рабочи клуба кĕчĕ.

—Културă пур-и сирĕн?

— Хупă терĕ сторăж.

— Мĕн хупă? Културăна хупса лартрăр-и?

— Клуб хупă, ремонт тăваççĕ ăна. Ремонт пĕтсессĕн... халтурă терĕни-ха... ăна курма килме пул таратăн.

Кинона кĕчĕ.

— Епĕ културă пирки килтĕм. Пур-и сирĕн?

— Пайан пирĕн „Чикаго".

Лачлатса сурчĕ те ҫын мрамăрлă урай ҫине, малала карĕ.

Театăра кĕчĕ.

Кантурĕ хупă. Хĕрлĕ кĕтесре карт ҫапса лараççĕ пĕтĕм вдохновенисене пухса тăват-пилĕк аргист.

— Културă пур-и сирĕн?

— Културă?! Кам ҫырнă ăна? Есĕ ҫырнă-и? Кирек кам ҫырнă пулсан та, пире „Ҫĕр ҫĕкленет", „Йалта", „Ҫĕнĕ хум" пулнипе ҫитет. Ҫулталăк тытăнса тăтăмăр вĕсемпе. малала та тытăнса тăма пултаратпăр Наркомпрос пулăшсан,—терĕ пĕри хăйĕн ҫук уссине пĕтĕрсе илсе илемлегсе.

Ҫук еппин?!

Ăҫта кайас? Пасара кайас.

Симĕс пасарта ҫўрерĕ. Културă тупаймарĕ. Унти столовăйа кĕчĕ. Вăл кĕнĕ вăхăтра столовăйра, алăк патĕнчерехри сĕтел хушшинче ларакан ҫын апат параканнине калаť:

— Ку сирĕн йашка-и, квас-и?—тет.

— Куратăн пулĕ-ҫке хăвах, мĕн ыйтатăн. Паранкă ишсе ҫўрет пулсассăн, йашка пулаť вара.

— Паранкă мар вăл — ҫур сухан.

— Апла пулсан купăста йашки вăл.

— Мĕн пирки тата кунта хуратул кĕрписем темиҫе ишсе ҫўреççĕ.

— Апла пулсан шĕвĕ пăтă антарса панă сана.

— Ку мĕнле йышши приправă тата — курăс (мучала) текенни?

— Повăртан ыйт—еп пĕлместĕп... Тăхта-ха апла пулсан, ан ҫи-ха. Савăт-сапа ҫунă шыв лекнĕ пул сана...

— Културă пур-и сирĕн?

— Мĕнрен тăваççĕ ăна: ашран-и, паранкăран-и?

Ашран пулсан ашĕ ҫук пирĕн. Пирĕн пĕремĕш блўдă типĕ—паранкă йашки, иккĕмĕш блўдă—типĕ паранкă шуратни. Културă ҫук.

Унтан тухсан аран ăна пĕр милиционер културă ăҫта шырамалине каласа пачĕ. Милиционер суйеҫтерекенни пулман, ăҫта кĕнĕ унта чăнах та културлăх кураť хайхи ҫын: Куҫĕсем йалкăшаççĕ. Хавасланнă иккен Шупашкарта културлăх ытти учрежденисенче нумайипе. Паҫăр асăннă учрежденисенче те културă чылайах пуррине сиснĕ вăл (малтанхи кун вăл учрежденисенчи тумхахсене ҫеç курнă мĕн).

— Културă сулĕ ҫинчи тумхахсене шăлса тасатмала! — тесе кăшкăраť халĕ вăл пирĕнпе пĕрле.

Кунта ĕнтĕ сатирикăн ĕҫĕ пĕтет. Ҫавăнпа пăнчă лартма тивет.

**Иван Мучи**

# Кирпӗчпе строителсем

**Шупашкарти ҫуртӗр тӑвакан кооперативӗн кирпӗч савӑчӗ халӗ ҫеҫ кӑларнӑ кирпӗчисем пахалӑх йенчен пит начар.**

Пӗр учреждени кирпӗчсене пит начар туса пинӗ, тет.

Тепӗр учреждени ун патне телефонпа шанкӑртатарать, тет.

— Алло!..

— Итлетӗп...

— Кирпӗч пур?

— Пур. Сутатӑп кирпӗч!

— Илетӗп кирпӗч!

— Аван.

---

Пӗр извошчиксем кирпӗч илме пыраҫҫӗ, тет, ҫавӑнта.

— Начар кирпӗч.

— Тфу! Вырӑна та турттарса ҫитереймӗн ку кирпӗче, ҫурри ытла сапаланса пӗтӗ.

— Мӗн тӑвӑн ӗнтӗ йапӑхсемпе.

— Ну... Тийесе кайас.

Тийерӗҫ.

---

Пӗр прийомщик хайхи кирпӗчсене илет, тет.

— Ай-йай начар кирпӗчисем.

— Начар ҫав.

— Ку кирпӗч ваҙҙи вырӑн йышӑнса илме те шел пек туйӑнать.

— Шел те пуҙ ҫав.

— Ҫапах пире кирпӗчӗ пит кирлӗске. Йышӑнас пулать. Купалӑр, ачсемӗр, ҫавӑнта, анчах тирпейлӗн тыткалӑр. Сапаланса пӗтӗ.

— Епӗр купалама хавас.

---

Пӗр техник ҫурт тума тытӑнать, тет.

—Кирпӗч, теҫҫӗ. Кирпӗчӗ-и ку? Ун пек кирпӗчрен лайӑх ҫурт тума май пур-ши вара?

— Ӑҫта унтан?..

— Цемӗнт шел. Реҙсем. Каштасем...

— Ах, турҫырлахах, мӗн тӑвӑпӑр-ха?

— Тума шутланӑ йапалана тӑвасах пулать. тӑнар пулӗ, ачсемӗр, ҫурт купалама...

Тытӑнаҫҫӗ.

---

Пӗр прийомӑчнӑй комиҫҫи тунӑ ҫурта йышӑн тухнӑ, тет кайран.

— Шанчӑклах пулайман ку ҫурт. Чӗрӗлех [...] монт тумала пулать пулӗ кӑна.

— Да, кирпӗчи ҫав майлӑскер те... Ванчӑк,—ки[...] пӗч мар вӑл.

— Айалала выҙаса анма тытӑнмӗ-и ку?

Йышӑнчӗҫ тунӑ ҫурта.

---

Пӗр рабочисем ҫурта пурӑнма кӗреҫҫӗ, тет.

— Тӗлӗнмеле. Ҫурчӗ ҫӗнӗ, шӑтӑкӗсем те ҫӗ[...]

— Кирпӗчсем начар терӗ комиҫҫи.

— Ма илнӗ-ха ун пек начар кирпӗче. Мӗнш[...] унтан ҫурт тунӑ-ха? Мӗншӗн ҫуртне йышӑн[...] йулнӑ-ха?

— Есӗ ытлашши ан кӑшкӑр-ха. Ытлашши кӑ[...] кӑрсан, ҫурчӗ чӗтренсе ӳкесрен хӑрамала.

Шарламарӗҫ.

Пурӑнма пуҫларӗҫ. Халӗ те пурӑнаҫҫӗ-ха вӗсе[...] анчах пит шикленеҫҫӗ кирпӗчсем катӑлса пуҫ ҫи[...] ӳкесрен, йе... урӑх пысӑк хӑрушлӑх пуласран.

Ҫурчӗ ҫинчен пуҫран шухӑшласа ҫыртӑм, анч[...] кирпӗчи ҫинчен хам куҫпа курнине ҫыртӑм.

Пахалӑхшӑн кӗрешмелех ӗнтӗ, йулташсем, к[...] решмелех!

**М.**

# Куславкари взводсемпе дивизисем

Кунӗпе ӗҫлесе ырнӑ ҫурӑмсене кантарма аван хватерпе ҫемҫе вырӑн кирлӗ вӗт-ха? Ну, конешнӑ, хватерӗ пулсан вырӑнӗ те пулать (вӑпӑрки пулсан аври те пулать тенӗ пек).

Каҫхине ӗҫрен килсен ӑшӑ хватерте госпоҙасем пекех вырӑнсем ҫинче сарӑлса выртатпӑр. Вара ырӑ, тутлӑ ыйӑха сӑмсапа, ҫӑварпа харлаттарса ӗметпӗр. „Тӗнчере чи тутли—ыйӑх" тенӗ кахал ҫынӑн пословицӑ пек йумах пур. Анчах ыйӑх чи тутлӑ йапала пулсан та пирӗн патра нумайах канаҫлӑн ҫывӑраймастӑн. Сасартӑк сиксе тӑрса ху тавра пӑхкаласа илсе ухмах пек шарт сиксе илес:

— Батушки! Матушки!—Кӑшкӑрса йаран.

Есӗр, вулакан йулташсем, „мӗншӗн апла?" тесе ыйтма пултаратӑр. Мӗншӗн тесен сан пит-куҫу ҫинче ик-виҫ теҫетке, урусем ҫинче тепӗр взвод хӑнкӑласем сырӑнса илсе „йун ӗҫмели" суботник тӑваҫҫӗ. А вырӑн ҫинче—унта целӑй дивизи. Вара ним тума анраса пушар тухнӑ пек сиксе ӳкетӗн те ухмаха йернӗ кашкӑр пек икӗ аллупах ҫурӑмусене хыҫса йун кӑларса сураплататӑн. Вот вӗт ӑҫта йун ӗҫекенсем!

Ку сахал-ха, тата ҫтена ҫумӗнче тройкӑпа ч[...] пан „Илле пророк" пек таракансем ҫӗмӗрттер[...] конференци иртереҫҫӗ. Тата хатӗрлесе хунӑ пр[...] дуктӑсене (хамӑр ваҙҙи конешнӑ) йӗп чикме вы[...] рӑн ҫук сӑрӑнса илсе тапаланаҫҫӗ. Сахӑр тавраш пулсан—ӑна курса та йулаймӑн (тутла йуратаҫ[...] вӗсем!).

Ҫапла вара хӑнкласемпе таракансене хирӗҫ нас[...] тупать тусах ҫӗрӗпе ҫывӑраймасӑр иртерсе йарат[...] та кунӗпе сӗрӗмлӗ пуҫпа сӗнксе ӗҫлетӗн. Хӑ[...] чухне ӗҫлессӳ те килмест.

* * *

Комбинатри рабочисем чӑнах та хӑнкласенче[...] питӗ тӗртленеҫҫӗ. Пуринчен ытла тискер кайӑксе[...] 1,2-мӗш № бараксенче, 14,15,16,17,18,19-мӗш ҫурт[...] сенче нумай. Вӗсене хирӗҫ кӗрешме комбина[...] орканизацилеңнӗ, анчах формаҙнӑ кӑна.

Хватерсене кашни уйӑхрах дивинфекци тӑваҫ[...] Хӑнкӑласем пӗтес вырӑнне пушшех ӗрчеҫҫӗ. Мӗ[...] шӗн тесен дивинфектӑрӗсем хӑнкӑлапа тарака[...] ӑратисем пулмала.

**С. Чашмай.**

# Апат ҫийекен дневникĕнчен

## ҪЕНТĂБЕРĔН 23-МĔШĔ

Ĕнер тата виҫĕ кашăк илсе килтĕм. Арăм вăрҫат.

—Ку кашăксем, — тет, — алюминирен тунăскерсем-ха, йурат. Ĕнер шур металран тунине илсе килнĕччĕ... Посудă тĕлĕшпе нимĕнле план та ҫук санăн...

## ҪЕНТĂБЕРĔН 30-МĔШĔ

Пирĕн столовăйра алăк патне хуралҫă тăратнă. Посудине кайала паратăн та, столовойран тухма номĕр илетĕн, ахалĕн кăлармаҫҫĕ. Унта та епĕ ăс тупрăм! Номĕрĕсене хыт хутран тунă, коппи ўкерсе ун пек номĕрсем тума питех те йавăр мар. Васканă пек пулса хуралҫине тыттартăм та пулчĕ те виҫĕ вилкă, пĕр кашăк, тепĕр ҫĕҫĕ илсе килтĕм киле.

## ОКТĂБЕРĔН 3-МĔШĔ

Вилкăсемпе кашăксене сĕтел ҫумне вăљчăрапа ăкарма пуҫларĕҫ...

Октăбĕр революци 16 ҫул тултарат, вĕсем шан и пулчĕҫ, — йĕрке-и ку?

## ОКТĂБЕРĔН 5-МĔШĔ.

Вилкăсене мĕнле майпа вăљчăраран кăларса илле пулассы ҫинчен шухăшласа вăхăта иртертĕм. Пăчăкă хыйрипе килсен, — сасă тухма пултарат. Скандал тапратса йарĕҫ.

## ОКТĂБЕРĔН 6-МĔШĔ

Шухăшласа тупрăм мĕнле тумалине. Столовăйа сĕтĕм те, пĕр сĕтел патне пырса каларăм: йулашсем, — терĕм, — тухса кайăр-ха ку сĕтел хушинчен, ăна срочнă йусама хушрĕҫ мана, — терĕм. Пĕтĕм вăљчăрапа ҫыхнă посуди мĕнĕпех йăтса тухса карăм вара хайхи сĕтеле...

## ОКТĂБЕРĔН 12-МĔШĔ

Тфу! Ĕнер столовăйра вилкă памарĕҫ. Ҫук, теҫĕ. Мĕн туса пурăнат-ши администраци?! Хаклă „Капкăн", ҫаклатса илха ăна хăвăн йĕплĕ хĕскĕчўпала лайăххараххăн, ĕмĕрлĕхе асăнмалăх.

„Капкăн" резолюцийĕ: Ăнлă-пуҫлă пулăр-ха, гражăнсем. Хавăра вĕт сийен тăватăр. Тата ҫийĕнчен августăн 7-мĕшĕнче тухнă закона та аса илмеле.

## ХАКЛИПЕ ЙЎННИ.

Купăста ҫинчен, тепĕр майлă каласан, рабочи снабжени ҫинчен пырат кунта пирĕн сăмах.

Шупашкарти 10 мĕш номĕрлă хупă ларйокра купăстан пĕр килограмĕ 20 пус тăрат. Ҫав вăхăтрах Пахча-ҫимĕҫ сойузĕн ҫўлти пасарти ларйокра ав купăстанах 15 пуса сутаҫҫĕ.

— Хăш купăсти тутлăрах—20 пус тăраканни-и, 5 пус тăраканни и?

—Иккĕшĕ те пĕр тутах калаҫҫĕ.

—Апла мар пулĕ. 20 пус тăраканни тутлăрах пулĕ.

—Ҫук, пĕр тутах калаҫҫĕ. Анчах 20 пус тăраканнинчен урăхларах шăршă кĕрет.

—Мĕнле шăршă кĕрет вара унран?

—Непмăнла шăршă. Вăл шăршă кооперативра ларакансенчен ҫапнă купăстана.

# Килес ҫул ун пек ан пултăр

Вăрмарта тырă виҫсе илекен те, склад пуҫлăхĕсем те, заготзерно пуҫлăхĕ те хăш складра мĕн чухлĕ тырă хунине пĕлмест.

(„Канаш", 218 №).




**Инструктăр:**—Складсене сирĕн мĕн чухлĕ тырă хунă?

**Заготзерно пуҫлăхĕ:**—Еп пĕлместĕп. Склад заведуйушчинчен ыйт.



**Инструктăр:**—Склада сирĕн мĕн чухлĕ тырă хунă?

**Склад заведуйушчийĕ:**—Еп пĕлместĕп. Прийомщĕкран ыйт.



**Инструктăр:** — Сирĕн склада мĕн чухлĕ тырă хунă?

— Ăҫтан пĕлетĕп епĕ. Темчул хуре хăварчĕҫ колхозниксемпе йединоличниксем. Тепĕр страницăна кайса вĕсенчен ыйт.

**Илле Тукташ.**

# Рекорд

Хисеп хыççăн хăваласа пахалăха кайа пăр хăвараканасемпе кĕрешесси те тĕп вырăнта мала („Правда" хаçатран).

1

Чашлаттарса çăмăр çăваť. Пăч тĕттĕм. Вичкĕн çил тустараť кăна выртан-тăрана. Колхозниксем вăрахăн шăвăнса, алă сĕмĕпе хыпашласа, жнейкă хыççăн тырă пухса пыраççĕ. Жнейкине икĕ лаша кӳлнĕ, иккĕшĕ те аран-аран урисене сĕтĕркелесе утаççĕ.

— Ну, сăхăм, аťа ут!—çуйăхаť машинис,—ăçта шала кĕртсе йаратăн! Курмастăн-и мĕн, хăшин чухлĕ шăйрăк йулса пынине?

— Ăçтан курас манăн? Каçхине курма епĕ тăмана мар вĕт...

— Тăманаран та тăмана çав.

Лăплавчĕç. Лĕсĕл-лĕсĕл-лĕсĕл... лĕсĕлтетет машшин урапи. Пăртакçах кайсан жнейкă пачах ĕçлеми пулчĕ, темĕн сырăнса тулчĕ шатун хушшине.

— Мĕн пулчĕ?

— Машин ĕçлемест.

— Тивер лашусене лайăхрах! Лашисем утмаççĕ те хăйĕн, машин çине перет

Куччĕр лашасене ăшалантарма тытăнчĕ.

— Ну-у, сăхăм, турт! Колхоз кулли пуласшĕ.

Ырхан лашасем тапса туртаççĕ.

— Аť аť-ťа! Аť-ťа ťа-а!

Пăнť!—турĕ жнейкăн хачи.

— Тăраť лашуна, туса пĕтмен кĕреçе аври!—çухăрса йачĕ машинис, пĕтĕм халран кайса. Хăй хуп-хура шыва ӳкнĕ мĕскĕн. Лешĕ çаплах ăшалантараť лашасене.

— Тăрат тенĕ, шуйтан пуçĕ, машин çĕмĕрĕлсе карĕ.

— Тăратма пултараймастăп, хуçа хушман. Рекорд!

Çĕмрĕк жнейкăпах илтерсе пыраççĕ хăйхисем. Тăрмаланса кăна йулаť йĕп-йĕпе тырă. Анчах ха ун çине ăçтан пăхатăн — рекорд!

2

Районран уполномоченăй килнĕ. Аллисене хыçалала тытнă та, калле-малле уткаласа çӳрет кăнцељаривче. Хăй пĕрмай калаçаť, калаçнă май аллисене сулкалаť. Чĕлхи — пулемет, сăмаххине—автан сăхса çитерес çук.

— Есĕр-р-р-р района кайала сĕтĕреттĕр. Позор!

— Есĕр-р çаплах тырă пуçтарса кĕрместĕр. Патшалăха çаплах тӳлесе татмастăр. Позор!

— Винават,—пӳлет колхоз пуçлăхĕ,—çанталăк йĕпе тăчĕ...

— Молчаť! Кахалсем есĕр, саботажниксем. Лодыри, черви—козыри!.

Йулашки сăмахне каланă хыççăн уполномоченăйăн кутне те курса йулма пулмарĕ. Йăлт анчах тухса вĕçрĕ кӳршĕри йалсоветне. Колхоз пуçл вĕткеленсе хăваласа кăларса йачĕ халăха кĕ кĕртме.

Сиккипе илтерсе çӳреççĕ колхозниксем.

Сывлăш çавăрса илме те вăхăт çук.

Анатала-тăвала, пушăла та туллила, тĕр-т тĕр кăна хăвалаççĕ лашасене. Кĕлтесем вĕлт-в -вĕлт кăна сирпĕнсе ӳксе йулса пыраççĕ.

Çăмăрĕ çаплах çӳпçерен тăкаť.

Мĕн тăвас тетĕн ĕнтĕ чарусăр çанталăкпа? Е мĕн хăйĕн план, çанталăкăн хăйĕн.

3

Пушăла лавсем тăвала мăкăрлантарса хăпара —йут йал çыннисем.

Лашисенчен пăс тухаť, çыннисенчен тар йука

Шăтăк та шăтăк мар, йăран та йăран мар, х кăна персе çитрĕç 12 лав колхоз виккисем пати

Çитсе чарăнчĕç те тӳрех тийеме тытăнчĕç.

— Ах турă! Камсем кусем? Мĕнле кĕрет хура сем?

— Краву-у-ул! Кăнтăр кунĕнчех çарата-а-аç! Х ра-х-ах!

— Ех, айван старик,—пӳлет пĕр сăран пинша лă йĕкĕт.—Çаратаççĕ-и вара,—рекорд çапаççĕ, у мах!

— Мĕнле рекорд?

— Çапла рекордах. Есĕр ĕçлесшĕн мар, тыррă хиртен турттарса кĕртместĕр, акă хаљ ăна йут йа колхозĕ турттараť.

— Вĕсем хăйсенне те турттарса пĕтерменçке?

— Ан калаçса тăр, ухмах старик.

Саныран ыйтмаççĕ! Аťăр тийĕр. Йа отвечайу!

— Кам есĕ?

— Епĕ районри уполномоченăй—уйтĕр Приш баев.

Тăвату лав виккă, сакăр лав сĕлĕ кĕлти тийер Уттарчĕç.

Колхозниксем пӳлмеле илтерсе тухаççĕ ç йуппине

— Стой! Ăçта тийесе кайатăр? Кам разреш турĕ сире?

— Епĕ разрешайу,—ответлет çирĕппĕн уполн моченăй.

— Ăçта ун пек закон? Кам тунă ăна?

— Закона ухмахсемшĕн çырмаççĕ. Пирĕн ха рăн закон—рекорд!

— Пужалăстă ан намăслантарăр, парса хăвар тыррине,—тилмĕрет колхоз председателĕ.

— Не мошĕм!

— Пайнах пĕтĕм ĕçсене туса пĕтерме сăмах ĕратăп.
— Голым словам не верим.
— Апла пулсан ме акă подпискă парам.
— Çыр в таком случайе.

Председатĕл çырчĕ, уполномоченăй портфĕле икс хучĕ. Ĕç пулчĕ: 4 лав виккине парса хăвар-ĕç,—кашни лавĕшĕн пĕрер ĕç кунĕ, çуршар пăт раш сăптăрса илчĕç. Ытти тыррине хăйсемпех урттарса кайрĕç. «Ан тив пĕрре вĕренчĕр, на то екорд» шут турĕ уполномоченăй.

4

— Пожар! Пожар! Çунатпăр!
— Кам çунат? Ăçта пожарĕ?
— Колхоз капанĕсем хыпаççĕ. Хăвăртрах!
Çынсем витресемпе, пакурсемпе, çарамас, çара-уçăн тăвала чупаççĕ.
— Тон-тон-тон!—тутарат пожар чанĕ.
Унччен те пулмарĕ дружинă членĕсем, икĕ насос-а, çутă калпакĕсене йăлтăртаттарса, çиççе иртсе айрĕç.
Çитрĕç колхоз анкартине.
Капансем мăкăрланса кăна лараççĕ.
Хăвăртрах насоссемпе сирпĕтме тытăнчĕç.
— Йăтса антарăр йунашар капанĕсене!
— Вут тивме ан парăр, вут тивме!
— Шыв тавайăр, шыв!
— Мĕн çăвара карса пăхса тăратăр?
Чупăр хăвăртрах пакурсем патне. Тавайăр хă-вăртрах сенкĕсем!
Йышпала тытăнса пĕр самантра тĕксе йăвалан-арса йачĕç капансене. Анчах вĕсенчен те тĕтĕм мăкăрланса пĕлĕте çĕкленчĕ. Пĕри, хăйулăраххи, хаљ кăна тĕксе йанă капан патне пырса, аллине шала чиксе йачĕ.
— Çунмаст ку, атсемĕр.
— Мĕнле йапала пулчĕ-ха вара?
— Ахаљ кăна хĕрсе кайнă. Пирчене выртнă.
Йĕпеле купаланăран пулĕ.
Ыттисем те, шиклене шикленех, капансем тавра кĕпĕрлевсе тулчĕç. Пăхаççĕ—чăнах та нимĕнле пожар та çук, ахаљ кăна пăсланса лараççĕ мĕн.
Чăрмантараççĕ çав пустуй çынсене. Килнĕ кил-лех салатсах тăкас пулчĕ вара пăсланакан капан-ене.
... Икĕ ернерен йал-йалĕнчи колхозсем, уй-хир çĕсене пухса кĕртсе, ыраш аки туса пĕтерчĕç. ку колхоз тĕлĕнмест те ун çинчен. Мĕн ăна тах пит хыпкаланма? Акса хăвармасăрах унăн ирте тырă акнинчен те ытларах шăтса тухнă.

АВАНС—АВАНТА...

Пирĕн Шупашкарти ГОРТ магазинĕ ытти мăн улăри ГОРТ макăзинĕсем пекех-пысăк мар, анчах çĕсем унăн пит сарлака вара.

Пĕлтĕр, виçĕмçул мануфактурăпа урана тăхăнма-и илме хывнă авансăн ГОРТ панулмисемпе тў-ерĕ. Панулми илмесессĕн, халĕ урăх нимех те араймастпăр, тесе хăратнă аванс хывнă çынсене.
— Панулми илмесен—40 градăслине илĕр...
Шпулљкă пама пултаратпăр тесе йурлассĕ аванс ухаксансем.

**Хулана, урамсене, хамăрăн учрежденисене таса тытассишĕн кĕрешессине пирĕн çине тăрсах болљшевикла туса пымалла.**
**(Обком çекретарĕ Петров й. хула совечĕн пленумĕнче калана сăмахран).**

Шупашкарта пуштă кантурне, хаçатсем валеçнĕ çĕре кашни кунпа пĕрех качакасем кĕрсе ирсĕрлесе çўреççĕ.




Качака. Ме-ке-кек, Кондратĭйĕв йупташ, ман килхуçи ерне ытла ĕнтĕ хаçатсăр ларат. Пĕлме хă-валаса йачĕ те, мĕнле пулат-ши, парса йарăн-ши? Ме-ке-кек!

ЙУСАМА ЙУРАТАКАНСЕМ

Шупашкарти çурт-йĕр тăвакан кооперативăн правленинче калăма çук ĕçчен çынсем лараççĕ. Ĕç пулман вăхăт пуласран вĕсем пит хăраса пурăнаççĕ, çавăнпа...

Иртнĕ хĕлле туса пĕтернĕ 12-мĕш номĕрлĕ пысăк çурта кăçалах ремонт тума тытăнаççĕ.

—Турăр-турăр, çулталăк ытла турăр, халĕ пăсатăр? Ăçташи пулнă сирĕн председатĕлпе техникăн куçĕсем ун чухне?

— Вĕсен куçĕсем-и? Куçĕсем вĕсен вырăнтах пулнă та, анчах ĕç çине пăхайман, тет çке, вĕсемшĕн чухлĕ шалу илесси çине çеç пăхнă, тет.

# Ăнман вăхăтсем

Хăш-пĕр чухне етемсен пурнăçра ăнман вăхăтсем те пулкалаççĕ. Мишшан та çавнашкалах, пысăк ĕçе тытăнсан кирек хăçан та ăнса пыман. Пĕр-пĕр ĕçе тума тытăнсан ун йаланах хăй тăвас тенĕ пек пулмаст, йалан тепĕр май пулса пырат. Мишшашăн пурнăçра мĕн пурри те пĕртен пĕр çутă мĕлке кăна. Çав çутă мĕлке çине шанса кăна пурăнат вăл. Вăл çутă мĕлке унăн пиччĕшĕ.

— Телейсĕр çын епĕ!—чунĕ тăвăнса çитнипе калаçат Мишша,—мĕскер тума çуратса йанăши мана, кам пек пулса тухнăши епĕ çак çут çанталăка?

Пиччĕшĕ чĕнмест. Йаланах хутсемпе аппаланса ларат вăл.

— Çынсем пурнаççĕ, çынсем савăнаççĕ те калаççĕ... А епĕ .. Ман колхозран пайок илсе пурăнмала тăвасчĕ, пичче. Ах, пит аван пурăнаççĕ-çке колхозниксем! Ах, колхоз... Кашни ĕçкунĕшĕн çуршар пăт тырă илеççĕ. Çитменне тата тĕрлĕрен апат çимĕç... Çăнăхĕ те, кĕрпи те, пĕрлĕштернĕ выљăх кĕтӳвĕсенче çитĕнекен самăр сурăх ашĕсем... Мĕнмĕн çук колхозра!

— Колхоза кĕрес пулат апла пулсан. Мĕн пăхса тăратăн?

— Телейсĕр етем епĕ! Пурнăç çавнашкал ман, сăхакан çĕлен пек тискеррĕн асаплантарат вăл мана. Ахаљ колхозник кăна пулса кĕрсен, ĕçлеттермесĕр усрамаççĕ, ĕçлемеле пулат.

—А-а, апла пулсан сан ĕçлемесĕрех пурнас килет. Хитре куçсемшĕн тытса усрамала-и-ха сана! Йурамаст апла. Пули-пулми етемсене колхоза хутшăнтарма йурамаст пирĕн. Директивсем хушмаççĕ апла тума.

— Çавăнпа та калатăп ĕнтĕ, епĕ телейсĕр çын тесе. Маншăн—директивсем, а теприсемшĕн нимĕн те кирлĕ мар, вĕсен пур çĕрте те ĕçсем çу сĕрнĕ пекех аван шуса пыраççĕ. Ак санах илсе пăхар есĕ те колхозра ытлашши нимех те тумастăн çке-ха. А пайокне пурпĕрех илсе тăратăн.

—Тупрăн кампа танаштармалине. Епĕ—ответлă работник, а есĕ кам? хурт-кăпшанкă!

— Ман пурнăç чăнахах та хурт-кăпшанкă пурнăçĕнчен уйрăмах мар! Ара, леш йалсовет çекретарнех илсе пăхар ха, вăл та пулин колхозри пайок çине шăшилле куçĕсемпе тĕлле пуçларĕ.

—Çекреттар çинчен ан та калаç, вăл мана кирлĕ çын!

—Саншăн кирлĕ пултăр еппин, колхоз ... хăш йенчен пырса çыпçăнма пултарат вăл? менне тата деловочĕ те, счотовочĕ те, ма... стки те, сторăжран пуçне пурте пайок илеççĕ.

—Пирĕн кооперацин урисем туратлă çав! пĕр чухне директивсене ытлашшийех пăхăнс... май килмест. Ирĕксĕрех тавраран çавăрăнса ... кайма тивет!

— А епĕ... Ĕмĕр ĕмĕрех типĕ тытса хăрс... рăнатăп. Никçан та пĕр çуллă какай татăкĕ к... çук. Куљтçут ĕçне тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен ... унта кĕрекен активиссем тожĕ пайок илеççĕ.

— Ĕçлекен çынсене конешнă паратпăр епĕр... сем ĕçлеççĕ, ну вот вара...

— Сирĕн тĕрлĕ специаљнăçпе ĕçлекен çиччĕн кăрăн!

— Çитĕ сана поминани кĕнекине вулама!..

— Пĕр епĕ кăна колхозри тутлă апат хур... чен катара...

— Тутлă апат хуранĕ патнерех çывхарма м... те пулин специаљнăç пури сан? Çук сан специ... нăç. Патшалăх сана вĕрен терĕ. Вĕренмерĕн! ак хăвна ху ӳпкеле ĕнтĕ...

— Парăр мана вуљвер, парăр помпă! Епĕ мăн пĕртен-пĕр кăккăрăма аркатса тăкам!..

— А-м-м!

— Нимĕн тума та кирлĕ мар епĕ чĕррисем ... шинче!

— Апла пулсан сана заготовкăпа ĕçлекен а... тумала пулат штолĕ.

— Мĕнле тав тăвас ĕнте ман сана, пичче? вĕт... Ех! Турăçăмм! Çăнăх, кĕрпе, пĕрлештернĕ ... љăх кĕтӳвĕнчи самăр сысна какайĕ!

---

Анчах йаланах ăнса пыман. Мишшан кунта ... лăпланса пурăнма май килмен. Мĕн тăвăн ĕнтĕ ... па, раз ун пурнăçĕ çавнашкал. Агĕнта куçнăра... нумай вăхăт иртмен. Хаçатсенче: „Колхозсенче ... миинистрацине тытăм расхучĕсене чакарасси ç... чен" постановлени çапăнса тухнă. Вăл поста... вленийе Тĕп Контрољ комиççипе СССР ĔХИ ... лăх комиссариачĕн коллегийĕ йышăнса хунă м...

Мишша пичĕшĕн сисмен хутранах йун тыма... сем карăна пуçларĕç. Йулашкинчен вăл çилли... шăнăçтараймасăр Мишша çине тискер кайă... сиксе ӳкрĕ.

— Ăм-мм! Чорт!., Йĕпе сăмса! Мĕн чухлĕ çын... пайок памалла турăм, нихçан та нимĕн те пулма... А сана çырнă çырманах пĕтĕм ĕç ишĕлсе ан... Чорт!..

— Епĕ айăплă мар, пичче.

— Ытлашши çынсене колхоз хăйĕнчен тăрант... рса усранăшăн усракансем çине колхоз пурлăх... тустаракан çине пăхнă пекех пăхса, айăплисе... сута памала", тенĕ. Пĕлетни мĕне пĕлтерет ва...

Мишша те пĕлет. Епĕр пĕлетпĕр, çавăнпа та х... лĕ епĕр, колхозниксем, колхозри администраци... тытăм расхучĕсене ‚колхо р... м... ... ур ĕçлесе и... нĕ ĕçкунĕсен хисепĕн 8 процентĕнчен ытла ма... тата колхозăн укçа-тенкĕ тупăшĕн пĕтĕм сумми... чен 1 процент çурăран ытла иртмеле мар" тăва... пăр.

**Васильев.**

(Пуçламăшĕ 9-мĕш страницăра).



— Ей колхозниксем, мĕн чул тырă хурса хăвартăр?
— Кайала кайса тăмпуçсенчен ыйтăр.

# Кăларттарма пынă

Шултра çăмăр пăрçа çапнă пек пĕр чарăнмасăр апăртатса çĕр питне ислетет. Кĕрхи çил каççен çуртсен хушшисенче чирлĕ çын ахлатнă пек іваррăн хашлатса пўрт пĕренисене хыпашлать, пнă чўречесене уçа-уçа шаплаттарать.

Çакнашкал тискер кĕрхи каç тăлăх карчăк Упаççелник алăкне такамсем шанкăртаттарса силрĕç. Упаççа мăнакка ватă шăмшакĕсем ыратниахлаткаласа кăмака çинчен анчĕ те тухса çелк алăкне уçрĕ. Кайала кĕрсе кăмака сакки çинче ракан пĕчĕк лампине çутрĕ. Лампă çути уйăхлă ç пўрте кĕрсе çутатнă пек çтенасем çине сарă тă ўкерсе тулкаланчĕ. Алăк чĕрик туса уçăлнă çăн мунча пек ăшă пўрте хура йапала пĕркенсын кĕрсе тăчĕ. Упаççа мăнакка камне паллас тинкеререх пăхрĕ, анчах сасартăк хăранипе çеç кутăн кайса ўкмерĕ. Хулен-хулен чакса лти кĕтеселе çывхарчĕ. Пўрте çын вырăнне хуçăмламас мĕлке кĕрсе тăнă. Пуçĕ тăрăнче икĕ сăк мăйрака карăнса тăраççĕ. Икĕ йенче икĕ са пек пысăк хăлхасем.

Упаççа мăнакка çав тĕрлĕ хăраса çитнипе пĕр мах та чĕнеймерĕ. Кутăн чакса сакă çине хăпарте чĕтрекен аллисемпе тусанпа та хăрăмпа хулса нимĕн палăрми пулнă йатсăр турăшне умне трĕ. Кĕлтума хăтланса тутисемпе мĕкĕлтеттерчĕ, чах пĕр кĕлĕ сăмахĕ те аса илеймест. Сăхсăхма тланса çинçе те вăрăм аллисене сăмси умĕнче лаçлантарчĕ.

Алăк патĕнчи çăмламас мĕлке вырăнтан хускал. Качака пĕрене тăрăх утнă пек урай хăми çунче чĕрнисем шакăртатрĕç.

— Уй, турă чури пулнăскер,—хулăм та тискер сă илтĕнчĕ алăк патĕнчен,—хăçантанпа епĕ сана м алла илесшĕн шухăшласа пурăнтăм. Кăçал хоза кĕрсе тинех мана савăнтартăн. Тамăкра а ваљљи пит аван, ăшă вырăн хатĕрлесе хутă епĕр.

Çăмламас мĕлке чĕрнисемпе шакăртаттарса тти кĕтесселе кăраланчĕ. Упаççа мăнакка йатсăр ăшне аллинчен ўкерсе лутра чўречене перĕнчĕ, иĕ мĕнĕпе хăйпăтса çăмăр çине тухса ўкрĕ. исем çине сиксе тăрса колхоз правлени çурчĕ іеле кĕрхи çилрен те хытăрах вĕçтерчĕ.

Колхоз правлени алăкне хăйĕн ырхан пĕвĕпе рса çапăнчĕ те, пўрте, пĕрене пуçĕ кĕртсе пăкнă пек, урайне чăсăлса ўкрĕ. Шывран хĕвел не кăларса пăрахнă пулă пек чылайччен сывшне çавăраймасăр туртăшса выртрĕ. Унтан маен тăрса пўрт хушшине пўлнĕ парйĕр çине йанчĕ.

— Тата тепĕр „турă чури пулнăскер" вĕçсе çит- —илтĕнчĕ ун хăлхине.

Анланаймасăр йĕри-тавра пăхкаларĕ: хăйсен йасемех, хăшĕ тенкел çинче, йе чўрече çинче ывăнвыљăх пек пуçĕсене чиксе лараççĕ.

— Мĕн мăшкăлатăн,—тесе çухăрчĕ вăл колхоз çлăхĕ йеннеле пралук пек çинче аллипе йунаса. ншĕн колхоза улталаса кўртсе шуйттана сута? Çак минутрах колхозран кăларăр мана.

— Хурататăп,—терĕ пуçлăх кĕнеке шыранçи лса. Унтан хирĕç ларакан çамрăксен йеннеле çавнчĕ те халĕ вăл Анат-касра, чупăр часрах, терĕ. Лешсем çтена çумĕнче çакăнса тăракан пăшала илсе пĕр самантра урама тухса вĕçрĕç

— Шуйттан куртăним мăнакка?—ыйтрĕ пуçлăх шакапран пĕр кĕнеке туртса кăларса.

— Сана кам каларĕ? Ара епĕ шуйттан курни çинчен каламан та-çке-ха?—тĕлĕнчĕ Упаççа мăнакка.

— Кусем те сан пеккисемех,—терĕ лешĕ пўлĕмрен ытти колхозниксем çине кăтартса.

Лешсем нимĕн калама аптраса турă йатне асăнкаласа илчĕç.

— Кăларăр,—терĕ каллех Упаççа мăнакка хăйне сехĕрлентернĕ усал мĕлкене аса илсе.

Пуçлăх хут çинче перипе çатăр тутарса чĕрнине илтсен лăпланса кăмака патнеле утрĕ.

— Çапах та кĕçĕр чиле тавранмастăпах,—терĕ вăл кăмака сакки çине вырнаçса.

Чылай тăрсан çил уçса хупнă пек крыљца алăк сасси илтĕнчĕ, унтан ура сассисем йĕпе крыљца çинче çат тутарса пўрт алăкĕ патне çывхăраççĕ. Анчах тĕлĕрсе кайнă карчăксемпе мучисем ыйхăран вăранса пуçĕсене çĕклерĕç. Анчах алăкран нумайах пулмасть хăйсене сехĕрлентернĕ çăмламас мĕлке кĕнине курсан пĕр харăс урисем çине тăрса сурăх кĕтĕвĕ пек малти кĕтесселе ĕрĕхрĕç.

— Чарăнăр,—терĕ шуйттан хыççăн кĕнĕ пĕр пăшаллă çамрăкĕ ĕрĕхекенсене чўрече патне пыма пўлсе.

Шуйттан намăсланнă пек пўлса алăк патнеле пĕршĕнме пуçларĕ, пăркаланнипе вăрăм хўрне урайĕнче выљантарчĕ.

Алăкран тухса тарасран пўлсе тăракан комсомолец Иван шуйттана кăларчĕ те ухват пек мăйракисенчен çўлеле çĕклерĕ. Капăрт, тухса ўкрĕ урайне пĕр хут айалти кĕпе-йĕмлĕ етем питне аллисемпе хупласа шăпăр шатăкнеле упаленчĕ. Упаççа мăнакка вырăнтан хускалса чĕрне вĕççĕн алăк патнеле утрĕ, çăмламас тир ăшĕнчен тухса ўкнĕ етем пуçĕ урлă карăнса питне пăхрĕ.

— Етемсем,—терĕ вăл сасартăк, темĕскер тупнă пек кăшкăрса.—Ара ку Йĕрмеç Хветĕрĕ пулнă.

Ыттисем те ĕненмесĕр пыра-пыра пăхрĕç: шăпăр шатăкĕнче чăнах та килтен кăларса сасăсăр хăварнă кулак Йĕрмеç Хветĕрĕ намăсне ниçта хураймасăр тĕршĕнсе выртнă.

— Çапса пăрахас ăна,—терĕ Упаççа мăнакка алллисене кăнтаркаласа.—Вĕрентес ăна халăха сехĕрлентнрсе çўресе сийен тума

— Ан тивĕр, йулташсем,—терĕ пуçлăх кĕпĕрленсе пыракан халăха чарса,—ыранах милици аллине парăпăр.

Комсомолĕцсем „шуйттана" йалканашне илсе кайсан Упаççа мăнакка пуçлăх сĕтелĕ умне пырса тăчĕ:

Кайаллах çыр,—терĕ вăл именчĕклĕ сасăпа.—Хветĕр улталанипе пулчĕ ку иккен.

— Хуратман та епĕ сире,—терĕ лешĕ,—паçăр ахаљ çеç хуратнă пек турăм.

— Чўречене ахалех çĕмĕртĕм. Çавăнтах çатма тимри илсе мăйракине çапса хуçмала пулнă мĕн, шухăшласа утрĕ килнеле Упаççа мăнакка.

**Уйар (Хв. Уй-хир).**

# Карттă тăрăх

Калăпăр, ес, Шăмăршă районĕнчи халăх судйи. Хушамату сан Нестерăв пултăр еппин. Урамра август... Сулхăн йунлă кĕркунĕ хĕвеле пĕтĕмĕшпех ыталаса тытма ĕлкĕреймен пирки... Çанталăк аван. Пĕр сăмахпа каласан, урамра пачулми, пăмидор, черноçлив, т ытти пылак та ачаш çимĕçсен уйавĕ... Пăхатăн чӳречерен, санран инçех те мар, панулми йăвăççи. Ак пĕр сип-симĕс панулми ăшне темĕскер, август сĕткенĕ майлăскер йăрлатса кĕчĕ. Пуçларĕ панулми карăнма. Районра çук чипер хĕрĕн пит çăмартийĕ пек, хĕрелнĕ-çемĕн хĕрелчĕ, лаплатса çурăлас вĕçне çитрĕ.. Сан ăна курсан чӳречерен сикес, çитмĕл çичĕ хут тикĕлмакăлъ туса савăнас килчĕ. Анчах ес, асăрхамасăр кайала çавăрăнса пăхрăн та... Сасартăк чакрăн кайала. Сан пӳлĕмăнта август мар нойабĕр.. Унта сут сĕтелли икĕ заседатĕл, халăх.. Сан çӳçпуçна пĕр пĕрчĕ хăвармиччен тăпăлтарас килчĕ.

Анчах халăх умĕнче аван мар тесе. Суд пырат. Анчах август тенĕ йапала нийепле те асран кайасшăн мар. Çитменне вăл сана ĕлĕк-авала, тăван килъна, хăв катăк йĕмпе чупса çӳренĕ чухнехи кунсене аса илтерчĕ. Чупаççĕ шухăшусем. Пĕрерĕн-пĕрерĕн туха-туха тараççĕ вĕсем сан пуçунтан. Ăçта? Паллах, тăван килъна! Тĕленмеле, сан кӳлепӳ хĕрлĕ пустав витнĕ суд сĕтелли хушшинче уголовнăй делăсемпе аппаланса ларат, а шухăшусем, шухăшусем тарнă уш...

Ес вара нимĕн тума аптранипе суд пĕтнĕ хыççăнах лаша кӳлтеретĕн. Шухăшусем хыççăн кайасшăн çунатăн. Анчах тăван килъăнта нумайранпа пулман пирки ес, тăван килъу ăçта иккенне маннă. Пуçлатăн хыпаланма. Аса илес тесе пуçна тытса пăхатăн. Пуçăнта пĕр шухăш пĕрчите, вăл та пушă.

Ладнă куçусем пур. Ладнă вĕсем чăваш республикĕн карттине асăрхарĕç. Куçусем хушнă май ес хăвăн шĕвĕр пӳрнупа чăваш республикĕн картти тăрăх шутаратăн. Чи малтанах сан п рнӳ „Б.-Батрыево" тесе çырнă çĕре, унтан „Шаймурзино" тейекен пăнчă патне çитсе çапăнат. Шаймурзино?.. Тĕлĕнетĕн, хăв куçна ху шанмастăн малтанах... Унтан сасартăк, хăв катăк йĕмпе чупнă чухнехи сасăпа çари çухăрса йаратăн.—Ара, Шаймурзино, Батыревский район!.. вĕт вăл ман тăван йал, тăван кил!.. Лар нарслед Чугунов, карăмăр!..

Чугунов пăркаланат. Ес ăна çилхинчен çавăрса тытатăн та, лартатăн тăрантас çине. Карăр. Çитрĕр тăван йална, килъна, Шаймурзинăна!... Тăван килъу сана, хăвпа пĕрле пынă Чугунова та уйамарĕ. Хытăран та хытă тытса пăчăртарĕ вăл сире хăйĕн нумай сĕтлĕ кăкăрĕ çумне, ах, виноват, нумай сĕтлĕ мар, нумай ерех-сăралă кăкăрĕ çумне.

Тăраначченех ĕмĕрĕр, есĕр, ку пысăк кăкăра... Кăмăл çыранĕнчен йейува тухса аслă тинĕс пек сарăлакан савăнăç... хаваслăх!.. Çӳлĕрен те çӳле кармашса ухнă чун хавале!...

Сире тек-текех нимĕн те кирлĕ мар! Сирĕн умра, тулли те кĕпăкланса тăракан сăра стакканĕ пектулли пурнăç... Пурнăçри телейĕн чи çӳллĕ картлашки çине, „Михал архангĕл" лачах ухса тăнă есĕр. Çӳлтен пăхаттăр айала. Айалта Шăмăршă районĕнчи

халăх сучĕн çекретгарне, Çеменăв йулташа а[...]
ламали уголовнăй делă таптанса выртат. Тăр[...]
тăрсан есĕр,вăл делă хăвăр кĕсйунтан тухса ӳ[...]
не те, тата вăл хăш вырăнта выртнине те манат[...]
Мĕншĕн тесен сирĕн пуçăнта уголовнăй делă [...]
хаклăрах йапаласем выртаççĕ Сирĕн пуçăнта [...]
ван йал, тăван кил, унпа çыхăннă мемуарсем, [...]
теклĕ кăкăрăн пылакĕпе пирченнĕ йун тап[...]
т. ыт. те...

Кайран тин, тăван йалăн, килĕн пылак шăрши[...]
рĕлсен кăна тытса пăхаттăр есĕр хăвăр пуçна. [...]
пуçах... Анчах кăштах ырат пек.. Ыратат [...]
пулин те, вăл тек текех шухăшсăр мар. Вăл [...]
хăшлама кăна мар, уголовнăй делă тухса ӳ[...]
ĕмĕрлĕхех çухалнине те, сан суд сетелли хушш[...]
чен тухса суд-сакки çине куçса лармала пул[...]
сине те „пророк" лачах, малтанах каласа пама пĕл[...]

**Алагер В.**

### КУЛĂШ ĂСТИ.

Йанăшри çтенхаçатра кулăш пайĕ уçасшăн п[...]
нă, анчах кулă ш ăсти тупăнайманни канçĕрле[...]
—Кулăш пайне йертсе пыма Тойгерекри (Шупа[...]
кар районĕ) „Комунисăм çулĕ" промколхоз з[...]
хозне Соколов Лазарне чĕнес,—тенĕ редколл[...]
членĕсенчен пĕри. Вăл пит кулăшла çын. Ир[...]
2 уйăх хушшинче апат начар пирки колхозр[...]
лаша вилнĕ, çапах та уншăн вăл хуйхăрмаст, к[...]
са çӳрет.


# „Капкăн"

## журнала пурте ÇЫРĂНСА ИЛЕР!

**Хакĕ: 3 уйăха 75 пус, 6 уйăха 1 тенкĕ 50 пус, çулталăка 3 тенкĕ.**

# Чӑваш Совет писателӗсен Оргкомитечӗн уйӑхра пӗрре тухакан Илемлӗ литературӑпа критикӑ журналӗ

# СУНТАЛ

**РЕДАКЦИ КОЛЛЕГИЙӖНЧЕ:** Н. В. Васҫилйӗв (Шупуҫҫынни)—ответлӑ редактӑр, Елкер—ҫекретарӗ, А. И. Золотов, П. Иванов, Патман Н., Ваҫанкка, Митта Ваҫлейӗ, Шӑпчӑк Ҫ., Талвир.

**«Сунталра» чӑвашсен паллӑ литератӑрӗсем—совет писателӗсемпе поечӗсем, критиксемпе публициссем, тата искусствӑ тӗлӗшпе ӗҫлекенсем ҫырса тӑраҫҫӗ.**

**Сунтал** политикпа обчӑлӑх ыйтӑвӗн тӗп задачӗсене ҫутатса тӑрат, литературӑна социалисӑмшӑн кӗрешессинче партин ҫивӗч лӗҫпӑшалӗ ҫавассишӗн ҫапӑҫат, литературӑпа искусствӑн тӗрлӗрен фрончӗсенче болъшевисӑмла пысӑк искусствӑшӑн кӗрешет.

**Сунтал** илемлӗ литературӑ урлӑ предприйатисемпе колхозсенчи ӗҫ ударникӗсен сӑн-сӑпачӗсене кӑтартса парат. Ӗҫ ударникӗсене литературӑна чӗнсе вӗсене илемлӗ литературӑ ӗҫне вӗрентет.

**Сунтал** калавсем, драмӑсем, поемӑсем, сӑвӑсем, очӗрксем, публицистикӑпа критикла статйасем ҫапса пырса, вӗсем урлӑ вулакансене реконструкци тапхӑрӗнчи ҫӗнтерӳсемпе ҫитӗн сене кӑтартса парат.

**Сунтал** хӑй тавра чӑваш ӗҫхалӑхӗн Советла литературӑ вӑйӗсене пухса, вӗсене класлӑ литературӑ ҫулӗпе илсе пырат. Ҫырма пуҫлакансене вӗрентсе консулътаци парса тӑрат. Ҫӗнӗрен тухнӑ кӗнекесене хак парат.

Литературӑ кружокӗсем, шкулсем, вулав ҫурчӗсем, клубсем, хӗрлӗ кӗтессем, парти, комсомол, совет, профсойуз, обчӑлӑхпа хуҫалӑх организацисем, илемлӗ литературӑна йуратакан рабочасемпе колхозниксем, ӗҫхресченӗсем,—пурте «Сунтал» журнала ҫырӑнса илӗр!

Литкружок членӗсем, вӗренекенсем, йалкорсем!—«Сунтал» журнала ытларах сарма тӑрӑшӑр.

## Журнала пуштӑ уйрӑмӗсем урлӑ ҫырӑнса илмеле

## Журнал хакӗ:

3 уйӑха—1 т. 20 п., 6 уйӑха—2 т. 40 п., 12 уйӑха—4 т. 80 пус.

Уйрӑм №-рӗн хакӗ—40 пус.

Виҫӗ уйӑхран кайа подпискӑ илмеҫҫӗ.



...в производство 20-IX-33 г.
...сано к печати 23-XI-33 г
...гарь и выпускающий редактор И. ИЛЛАРИОНОВ.

Ответлӑ редактӑр И. Павлов (Пинер).

...б. 200×285. Об'ем 1 п. я.

Изд. газ. „Канаш"

...Чуваншлита № 1049 Чебоксары. тип. № 1 Чувашгиза. Заказ № 894. Тираж 8000 эк.

# БУРОКРАТ

Ноябрĕн 5-мĕшĕнче Канаш станци дежурнăйĕ Соколов Улăтăрала к…
ман таварлă пойăса станцивчен йăмасăрах йанă тесе сведени панă. Ç…
18 сехет хушшин 45 вакуна чарса тăнă.

Г. Филиппĕв ӳкерчĕкĕ.



Пойăса станцинчен кăларса йамасăрах йанă тесе сведенисем паракан бӳрократ—Соколов.